# ХИРБЮПЕ ПĔРЛЕ

Григорий Яковлевич Хирбю композитор ятне эпĕ Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланиччченех илтнĕ. Хăйне вара вăрçă çулĕсенче çеç курма тӳр килчĕ. Çапла, Шупашкарти Карл Маркс урамĕпе Герман Степанович Лебедев композиторпа Атăл хĕрринелле утатпăр. Уйчен те пулмарĕ, пирĕн ума яштака кăна, кăтрарах çӳçлĕ чипер каччă тухса тăчĕ.

— Паллашăр, ку Григорий Яковлевич Хирбю композитор,—терĕ Герман Степанович. Пытармастăп: çав тери хĕпĕртерĕм. Хам ăшăмра: «Кĕтни пурнăçланчĕ, Хирбю композиторпа та куртăм иккен»,—терĕм. Халĕ ĕнтĕ виççĕн пĕрле Атăл хĕрринелле шăкăл-шăкăл калаçса утатпăр. Григорий Хирбю хавхаланса калаçни халĕ те асран каймасть.

— Пирĕн, юлташсемĕр, чăваш музыкинче Федор Павловпа Степан Максимов, поэзире Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши уçнă çулпа хăюллăн утмалла. Халĕ тăрăшса ĕçлеме майсем пур. Вĕренме, ĕçлеме кăна ан ӳркен. Пире опера та, балет та, симфони те кирлĕ. Халăх чуна çĕклекен юрăсем кĕтет,—терĕ ун чухне Хирбю.

Эпĕ композиторпа пирвайхи хут тĕл пулнă чухнех çакна ăнланса илтĕм: Григорий Яковлевич — тăван халăх культурине, уйрăмах музыкине, аталантарас ĕçре пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлекен çынсенчен пĕри. Çак шухăш-кăмăл пурăннăçемĕн çирĕпленсе пычĕ.

Вăрçă хыççăн эпĕ Хирбюпе пĕрле Чăвашрадиора ĕçлерĕм. Эпĕ художество передачисен аслă редакторĕччĕ, Григорий Яковлевич радио хорĕн дирижерĕччĕ. Ку хорта республикипех паллă Михаил Измайлов, Зоя Селиванова, Георгий Алексеев, Михаил Кольцов, Олимпиада Агакова, Петр Кулагин тата ыттисем юрлатчĕç. Хирбюпе, музыка передачисен редакторĕпе, Зоя Селиванова артисткăпа пĕрле концертсен программине йĕркелеме, пăхса тухма тивертĕ мана. Хĕрсе кайса калаçмалли, тавлашмалли самантсем те пулкаланă. Анчах Григорий Яковлевич нихăçан та сассине хăпартмастчĕ, кăтăрса каймастчĕ. Унăн ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнеттĕм.

Радио хорĕнче чăвашсемпе пĕрле вырăссем те пурччĕ. Паллах, вĕсене чăваш юррисене юрлама çăмăлах пулман. Пĕррехинче Хирбю мана хăйне пулăшма ыйтрĕ.

— Эсĕ вырăс юлташăмăрсене чăваш сăмахĕсене тĕрĕс калама вĕрентме пулăшмăн-ши?—терĕ.

Эпĕ хавасланса килĕшрĕм. Çак ĕçре пире Чăвашрадион аслă дикторĕ Серафима Ефимова та пулăшатчĕ. Тăрăшни харама кайман—чăваш артисчĕсемпе пĕрле вырăс артисчĕсем те чăваш юррисене çепĕççĕн, сăмахĕсене ăнланмалла шăрантаратчĕç. Уншăн пурте чун-чĕререн савăнаттăмăр.

Час-часах пулаттăм эпĕ Григорий Яковлевич патĕнче. Кунта яланах пианино сасси илтĕнетчĕ. Çак сасă Хирбю юлташĕсене композитор патне пыма чĕннĕнех туйăнатчĕ. Çапла пĕррехинче урампа иртсе пыратăп. Кĕтмен çĕртен Григорий Яковлевич сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Васлей, пирĕн пата кĕмесĕр иртсе каятăн-и вара? Халех кĕр. Алăк яланах уçă. Кĕтетĕп,—терĕ вăл.

Кĕтĕм. Чылайччен калаçса лартăмăр.

— Эпĕ Ленинградри консерваторире вĕреннĕ чухнех «Нарспи» опера çырас ĕмĕтпе пурăнаттăм. Халĕ, акă, тĕллеве пурнăçлама тытăнтăм, Константин Иванов поэми тăрăх опера çырма пуçларăм, — терĕ Хирбю.

Эпĕ композитора чарсах: «Нарспи» опера пур-çке пирĕн. Ăна Иванишин композитор çырнăччĕ пулас», терĕм.

— Эпĕ те çыратăп. «Нарспи» поэмăри сăнарсем, ĕçсем, чăваш халăхĕн йăли-йĕркисем, сăвви-юррисем—пурте мана шухăшлаттараççĕ. Чĕрем тапнă чухне хамăн ырă ĕмĕтĕме пурнăçлатăпах, —хуравларĕ Григорий Яковлевич. Унтан пианино умне ларчĕ те: —Итле, эпĕ санăн «Çăлтăр вылять тӳпере» сăвву тăрăх юрă çыртăм, — терĕ. Хăй çавăнтах çак юрра шăрантарма пуçларĕ.

Композиторăн уçă та илемлĕ сасси хваттере шăнăçмасть, уçă чӳречерен урамалла тухса аслă Атăл тăрăх янăраса каять.

Пĕр çулхине Чăваш патшалăх филармонийĕ ман сăвăсемпе кĕвĕленĕ юрăсен автор концертне йĕркелерĕ. Ăна ăнăçлă ирттерме мана Григорий Хирбю, Филипп Лукин, Герман Лебедев композиторсем пулăшрĕç. Концерт пуçламăшĕнче Алексей Талвир писатель сăмах каларĕ. Чăваш композиторĕсем ман сăвăсемпе çырнă юрăсене хамăр республикăри юрăпа ташă ансамблĕ, радио хорĕ, Лукин, Лебедев, Хирбю эртсе пынипе хавхаланса, илемлĕн шăрантарчĕç. Концерт вĕçленсен, Хирбю ман аллăма тытса чăмăртарĕ те: «Малашне те çапла ĕçлер, тăван халăхăмăра çĕнĕрен çĕнĕ произведенисем парнелер»,—терĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Хирбю пултарулăхĕ сарăлса, вăйланса пычĕ. Унăн маларах çырнă произведенийĕсене, уйрăмах «Атăл» (сăвви А. Алкан), «Мухтавлă çĕршывра» (П. Хусанкай), «Тăван çĕршывăн» (Н. Васанкка), «Комсомол маршĕ» (В. Урташ), «Юрату вальсĕ» (А. Эсхель) тата ытти юррисене радиопа та, концертсенче те итлесе савăнаттăмăр. Пирĕн хушăра пултарулă, халăх культурине çĕклессишĕн чун-чĕререн тăрăшакан композитор пуррине туйса тăраттăмăр.

1950 çулта композиторăн малтанхи кĕнекисенчен пĕри—«Тăван Çĕршывăн, телейлĕ пурнăçшăн» ятлă—пичетленсе тухрĕ. Çакă, паллах, композиторăн ĕçлес шухăшкăмăлне татах та çĕклерĕ. Çĕнĕ кĕнекине мана асăнмалăх çырса парнелерĕ: «Тусăм, Василий Иванович! Пĕрле юрăсем çырнине асăнса, малалла татах та çĕнĕрен çĕнĕ юрăсем çырасса шанса, çак кĕнекене парнелетĕп. Г. Хирбю. 1950 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕ. Шупашкар».

Г. Я. Хирбю пысăк произведенисем çырас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлетчĕ. Вăл симфони оркестрĕ валли тăватă пайлă сюита, увертюра, хорпа оркестр валли «Ленин çинчен хывнă кантата», «Кай, кай Ивана» ятлă музыкăллă комеди çырчĕ...

1961 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче Григорий Яковлевич Хирбю 50 çул тултарчĕ. Çак куна республикăра анлăн паллă турĕç. Шупашкарта та савăнăçлă каç, композитор произведенийĕсенчен йĕркеленĕ пысăк концерт пулса иртрĕ. Композиторăн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ăшă сăмахсем нумай каларĕç. Эпĕ ăна халалласа çырнă «Чăваш юрри» сăввăма вуласа патăм.

Г. Я. Хирбюн пултарулăхĕ халăх сăввиюррипе тачă çыхăннă. Манăн кун кĕнекинче 1962 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче çакăн пек çырса хуни пур: «Ырхи передачăсенче Чăваш радиостанцийĕ Григорий Хирбю илемлетнĕ халăх юррисене пачĕ. Мĕнле илемлĕн янăратăн эсĕ, тăван юррăмăр! Санра халăх шухăш-кăмăлĕ, савнăçĕ, хуйхи-суйхи—пурте пур! «Нимене» юрра итлетĕн те тăван халăхăмăрăн авалхи йывăр пурнăçне аса илетĕн. Темле йывăр кунсенче те çынсем пĕр-пĕрне пăрахман, пĕрпĕрне алă панă, килĕштерсе пурăннă».

Халăх хушшинче мĕнле кăна юрă çук пулĕ. Савăнăçли те, хурлăхли те, чуна çĕклекенни те... Халăх пуянлăхĕ вĕсем. Пирĕн вĕсене упрамалла, илемлетсе, çунат парса халăха парнелемелле. Ку тĕлĕшпе Хирбю нумай ĕçлерĕ. Халăх юррисем тенĕрен çакна та каласа хăварам: эпир мăшăрăмпа иксĕмĕр, Патăръелĕнчи чăваш халăх юррисене юрла-юрла, магнитофон пленки çине çĕре яхăн çыртăмăр. Вĕсене пĕтĕмĕшле «Аслă Арапуç юррисем» ят патăмăр. Ярăма Г. Я. Хирбю, Ф. М. Лукин, Г. С. Лебедев, А. Г. Орлов-Шуçăм, Г. С. Максимов композиторсем итлесе пăхрĕç. «Кăмăла каякан, лайăх юрăсем. Вĕсене пленка çине çырса хăварни питех те аван», терĕç вĕсем. Григорий Яковлевич вара çав юрăсенчен чылайăшне илемлетесшĕнччĕ. «Тархасшăн, юррусене ан çухат. Пурте килĕшрĕç, чуна тыткăнларĕç. Малтанах «Куккукĕсем чăпар» текеннине илемлетем, унтан ыттисене çунат пама тытăнăп»,—тетчĕ. Анчах та вăхăт çитеймерĕ. Мĕн тăвас тетĕн? «Аслă

Арапуç юррисем» ярăмри чылай юрăсене халĕ Геннадий Максимов композитор илемлетрĕ.

Г. Я. Хирбю республикăри хуласемпе ялсене тухса çÿреме, халăх хушшинче пулма юрататчĕ. Ку çеç те мар, вăл хамăрпа тăванла республикăсемпе облаçсене те час-часах çитсе куратчĕ. Эпĕ хам та унпа пĕрле Дагестан АССРĕнче, Горькипе Ульяновск хулисемпе облаçĕсенче пултăм. Тÿрех калатăп: пур çĕрте те хăйĕн илемлĕ, шухăша яракан, чуна çĕклекен произведенийĕсемпе çынсене савăнтаратчĕ композитор, тăванла халăхсен туслăх кĕрекине илем кÿретчĕ, сăпайлă, çав тери ырă кăмăллă çынччĕ. Ăна вырăс тата тăванла халăхсен композиторĕсем чун-чĕререн сума сăватчĕç, хисеплетчĕç. Пĕр çулхине Григорий Яковлевичпа пĕрле Мускав сывăхĕнчи Рузăри композиторсен çуртĕнче пулма тÿр килчĕ. Василий Соловьев-Седой, Тихон Хренников тата ытти паллă çынсемпе чăваш композиторĕ ĕç çинчен тăванла калаçса ларнине курсан, питех те савăнтăм. Çав кунах, вăхăт каç енне сулăнсан, Григорий Яковлевичпа пĕрле уçăлса çÿреме тухрăмăр. Пăхатпăр—пире хирĕç Тихон Хренников килет.

— Ну, Гриша, ĕçÿсем мĕнле пыраççĕ? Халĕ те оперупах тертленетĕн пулас. Опера çырасси, паллах, йывăр ĕç ĕнтĕ. Анчах та пирĕн йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлес пулать. Эпĕ акă «Амăшĕ» оперăн оркестровкине çырса пĕтеретĕп. Вăйăм çитет-ха. Произведени ăнăçлă пулса тухасса шанатăп,—хĕрÿн калаçрĕ Хренников.

Хирбю ман еннелле çаврăнчĕ те: «Ку пирĕн поэт-юрăçă, Василий Давыдов-Анатри. Паллашăр»,—терĕ.

— Паллатăп. Пĕр çулхине Мускаврa, Композиторсен союзĕнче, эпир чăваш композиторĕсен произведенийĕсене итлерĕмĕр, хакларăмăр. Çав ларура Давыдов-Анатри пулнине те астăватăп. Сирĕнпе мана Филипп Миронович Лукин паллаштарчĕ. Акă, халĕ Рузăра тĕл пултăмăр,—терĕ те мана тепĕр хут алă тытрĕ. Паллă композиторпа сывпуллашса уйрăлсан, Григорий Яковлевич: «Кăмăлĕпе те, ĕçĕпе те лайăх çын вăл, Хренников. Вырăс композиторĕсем пире ĕçре мĕн чухлĕ пулăшман пулĕ. Тавах уншăн вĕсене»,—терĕ.

Хирбю нумай çул хушши тăрăшса ĕçлени харама каймарĕ. Хамăрăн музыка театрĕн сцени çинче чылай çулсем хушши «Нарспи» опера янăрать ĕнтĕ.

Пĕррехинче композиторпа пысăк формăллă музыка произведенийĕсем çырасси синчен калаçса кайрăмăр та Григорий Яковлевич çирĕппĕн çапла каларĕ: «Чунчĕремре балет, симфони, гобойпа, виолончельпе каламалли произведенисем çырас ĕмĕтĕм пур. Пирĕн халăх юрлама юратать. Лайăх, чун-чĕрене çĕклекен-ăшăтакан юрăсем çырса хăварасчĕ-ха. Ĕçсем нумай, ан ÿркен çеç. Эпир çырнă произведенисене тăван халăх хапăл туса йышăнни мĕн тери пысăк савăнăç, телей».

Тăрăшрĕ, ĕçлерĕ Григорий Яковлевич. Вăл çырнă илемлĕ юрăсем халĕ республикăра пур çĕрте те мăнаçлăн янăраççĕ. Кам пĕлмест пулĕ «Апрельте çуралнă Ленин» (сăвви В. Алентейĕн), «Коммунистсем эпир, коммунистсем» (В. Урдаш), «Шупашкар каçĕсем» (А. Галкин), «Юрламасăр мĕнле чăттăр чун» (А. Артемьев), «Пирĕн хĕрсем пит маттур» (Н. Сандров), «Савнă Шупашкарăм» (Г. Ефимов), «Çĕмĕрт» (Г. Орлов), «Ҫилсе курăр уява» (П. Афанасьев) тата ытти чылай юрăсене? Вĕсене радиопа, концертсенче, çамрăксен вăййисенче юрланине илтетĕн те, пирĕн халăхран çавăн пек пултаруллă композитор тухнишĕн, унпа пĕрле ĕçлеме тĕл килнишĕн чунчĕререн хĕпĕртетĕн.

Хирбю ăнăçлă пулса тухнă кашни произведенийĕшĕн чĕререн савăнма пĕлетчĕ. Никăçан та манас çук: пĕр çулхине чăваш композиторĕсен пленумне Патăръел районĕнче ирттерчĕç. Ун ĕçне тăванла республикăсенчен килнĕ паллă композиторсем те хутшăнчĕç. Пленумра ирттернĕ пĕр пысăк концертра Григорий Хирбюн гобойпа калама çырнă произведенийĕ янăрарĕ. Ăна хамăр ентешĕмĕр, çĕршывĕпе паллă артист-гобоист Анатолий Любимов çав тери пултаруллă, ăста каласа пачĕ. Куракансем композиторпа артиста саламласа, тав туса тăвăллăн алă çупрĕç. Григорий Яковлевич чăтаймарĕ, хăвăрт кăна сцена çине чупса хăпарчĕ. Анатолий Любимова тăванла ыталаса илчĕ, кăмăлтан тав турĕ. «Эпĕ кунта тин çеç янăранă гобойпа каламалли концерта Любимов артиста, хаклă тусăма телей, ырлăх-сывлăх сунса халаллатăп. Пирĕн ĕçри туслăх малашне те ялкăшса, хăват илсе пытăр!»—терĕ.

Хирбю ĕçри юлташĕсемпе яланах килĕштерсе, тату пурăнатчĕ. Вăл Ф. Лукинпа Г. Лебедев, В. Ходяшевпа Ф. Васильев, А. Орлов-Шуçăмпа А. Васильев, Т. Фандеевпа А. Токарев, А. Петровпа А. Асламас тата ытти композиторсемпе пĕрле ĕç синчен шухăшласа, канашласа ларнине, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композиторсене пулăшнине эпĕ сахал мар курнă.

Манăн кун кĕнекинче 1962 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче çырнинчен:

«Касхине Герман Лебедев композитор патне кĕтĕм. Унта Григорий Хирбюпе Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Юрий Мясников ларассĕ. Мясников «Çамрăк коммунист» хаçат валли «Суйлав юрри» çырнă-мĕн.

— Эпĕ çырнă юрра итлесе пăхмăр-ши?—ыйтрĕ вăл.

Григорий Яковлевичпа Герман Степанович савăнтах пианино умне ларчĕç, Мясников юррине нота тăрăх тĕрĕслесе пăхрĕç, хăшпĕр вырăнсене пĕрле юсарĕç, тÿрлетрĕç. Юлашкинчен икĕ паллă композитор çамрăк авторпа çуммăн ларса çĕнĕ произведение малтан пуçласа вĕçне çитичченех юрларĕç.

— Акă, тепĕр юрă çуралчĕ. Саламлатпăр сана, Юрий. Ĕçÿ малашне те ăнса пытăр,— терĕç вĕсем.

Григорий Яковлевич литературăпа искусство деятелĕсен шанчăклă çывăх тусĕччĕ. Уйрăмах П. Хусанкайпа А. Кăлкан, Ю. Скворцовпа В. Урташ, Н. Сандровпа Ю. Сементер поэтсене, М. Денисовпа П. Филиппов, Т. Чумаковăпа А. Ковалев артистсене, М. Спиридоновпа Н. Сверчков художниксене, хăйне ĕçре пулăшса, вĕрентсе пынă Г. Литинский профессора тата ытти пултаруллă юлташăмăрсене ырăпа асăнатчĕ.

Григорий Яковлевич Хирбюпе иксĕмĕр те юрăсем сахал мар çыртăмăр, тăван халăхăмăр кăмăлласа йышăнчĕ вĕсене. Уйрăмах «Тăван партие—мухтав!», «Çăлтăр вылять тÿпере», «Совет Çарĕ çинчен хунă юрă», «Кала, тусăм, чăннине» тата ытти юрăсене палăртам. Композиторăн манпа пĕрле çырнă юлашки юрри «Эпир, çĕн ĕмĕр çыннисем» ятлă.

Хирбюпе юлашки хут тĕл пулни хальхи пекех асра.

1983 çулхи хĕвеллĕ çу кунĕсем. Эпĕ Кăкшăмри писательсен çуртĕнче ĕçлетĕп, Хирбю—композиторсен çуртĕнче. Анчах канасси таçта-ха уншăн, яланах ĕç çинчен шухăшлать.

— Александр Кăлканăн ачасем валли çырнă поэми тăрăх опера çыратăп-ха. Вăхăт çаплах çитмест. Çак кунсенче Никифор Мранькккан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕпе паллашрăм. Кăмăла кайрĕ. Çак пысăк произведенирен либретто туса опера çырас ĕмĕт çуралчĕ,—терĕ Григорий Яковлевич.

Тепĕр кунне Г. Я. Хирбю хăй канакан çурт умĕнчи сак çине тухса ларнă. Çерем çинче мăнукĕсем, пĕчĕк ачасем каçса кайса савăнăçлăн ташлаççĕ. Вĕсен юрри-ташши Кăкшăмри хырлăх тăрăх янăраса каять. Хирбю хăйĕн юратнă мăнукĕсем çине çав тери савăнса пăха-пăха илет, алă çупса ларать. Мăнукĕсем ташла-ташла ывăнчĕç пулас, пĕрин хыççăн тепри аслашшĕ патне чупа-чупа пыраççĕ, ăна ыталa-ыталa илеççĕ. Эпĕ те чăтаймарăм, ача-пăчан савăнăçлă вăййи умне пырса тăтăм.

— Эх, мĕнле савăнаççĕ, телейлĕ çитĕнеççĕ. Савăнăр, савăнăр, мăнукăмсем! Эсир—пирĕн шанчăкăмăр, эсир—пирĕн пуласлăх! Мир хĕвелĕ ĕмĕр-ĕмĕр ялкăшса тăтăр!—тет Хирбю.

Композиторăн çак сăмахĕсем мана шухăша ячĕç. Ман умра мирлĕ пурнăçăн хăватлă юрăçи савăнса ларнăн туйăнчĕ. Эпир пĕр-пĕринпе кăмăллăн калаçса, пĕр-пĕрне ырлăх-сывлăх сунса уйрăлтăмăр.

— Тепре тĕл пуличчен!—терĕ Григорий Яковлевич Хирбю.

— Ырлăх-сывлăх сунатăп! Тепре тĕл пуличчен!—терĕм эпĕ те хамăн тусăма, ĕçри юлташăма, юратнă композитора... Анчах эпĕ ăна урăх кураймарăм. Тепĕр эрнерен Хирбю пиртен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ...

Çапла, Григорий Яковлевич Хирбю хăйĕн хĕрÿ чĕри тапма чарăниччен тăван халăхăмăр, Тăван çĕршыв, тăван парти умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçласа пычĕ.

Василий **ДАВЫДОВ-АНАТРИ**,
поэт-юрăçă, РСФСР тата Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ